24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
НОЯБРЬ
10
ТУНТИКУН
265 (5980) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Нимĕç оккупанчĕсене—вилĕм!

Октябрьти Социализмлă Аслă революци 24 çул тултарас кун ырăн тенĕ чухне пирĕн аслă çĕршыв, пирĕн пĕтĕм совет халăхĕ Сталин юлташăн докладне итлерĕ. Пирĕн тăван çĕршывштăн йывăр та хаяр кунсем килсе тухмă вăхăтра юратнă çулпуçăн уçăмлă та витĕмлĕ сасси, унăн пире çапăçура иксĕлми панчăк кӳрекен сăмахĕсем илтĕнсе кайрĕç. Нумай миллионлă совет халăхĕ çав сăмахсене пĕтĕм чунĕререн кĕтсе тăнă, халăх кĕтсе тăнине çулпуç тивĕçтерчĕ.

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Еçсынни Депутачĕсен Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче 1941 çулти ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă докладра тăватă уйăх çурă хушши пулса пыракан отечественнăй аслă вăрçăн итогĕсене тата ирĕклĕхшĕн пыракан çак вăрçăра эпир хамăр ума кăларса тăратнă задачăсене яланхи пекех сталинла витĕмлĕхпе çутатса панă. Халăхи вăрçă пирки пулса тăнă лару-тăру куç умне яр-уçăн тухса тăчĕ.

Сталин юлташ докладĕнче никам сирсе ярайми большевикла тĕрĕслĕх, чăнлăх ниçăçан пытăхми хурçă хĕç пек çутатса тăрать. Çав чăнлăх тăшмана пуçран пырса çапать, совет халăхне тата та ытларах хавхалантарать. Сталин юлташ совет халăхĕнчен пирĕн пысăк çухатусене те, пирĕн çăран вăхăтлăха пулнă ăнăçсăрлăхсене те пытарса тăмасть. Пачах урăхла, вăл çав çухатусем çинчен пĕлтерсе, вăхăтлăха пулнă ăнăçсăрлăхсен çăлтавĕсене усса парса, совет халăхĕпе унăн хĕçпăшаллă вăйĕсене татах та хаяртарах кĕрешӳве мобилизацилет.

«Хĕрлĕ Çарăн ăнăçсăрлăхĕсем, — тет Сталин юлташ, — рабочисемпе хресченсен союзне, çавнашкалах тата ССР Союзĕнчи халăхсен туслăхне вăйсăрлатмарăç кăна мар, пачах урăхла, тата та ытларах, — вĕсем ССР Союзĕнчи халăхсен çемйине никам çĕмĕрейми пĕрлĕхлĕ лагерь туса хучĕç, вăл лагерь хăйĕн Хĕрлĕ Çарне, хăйĕн Хĕрлĕ Флотне паттăрăн пулăшса тăрать. Совет тылĕ нихăçан та халхи пек çирĕп пулман. Кирек хăш ытти государство та, хăйĕн территорине пирĕн чухлĕ çухатнă пулсан, йывăрлăха тӳсеймесĕр пĕтсе ларнă пулĕччĕ, — çакă вăл питех те пулма пултарать. Совет стройĕ йывăрлăха çавăн пек çăмăллăн тӳссе иртнĕ пулсан, хăйĕн тылне татах та çирĕплетрĕ пулсан, çакă вăл совет стройĕ халĕ пуринчен те çирĕп пулнине пĕлтерет».

Фашистла стратегсен «çиçĕм пек хăвăрт вăрçă» планĕсем путланса ларнине никам сирсе ярайми фактсемпе кăтартса парса, нимĕç войскисен Европăри тылĕ, çавăн пекех Германири тылĕ те гитлерла авантюристсемшĕн вулкан пулса тăнине кăтартса парса, Сталин юлташ никам сирсе ямалла мар вывод тăвать: нимĕç империалисчĕсене тата вĕсен çарĕсене пурпĕрех çапса аркатмалла, сĕмсĕр нимĕç оккупанчĕсене пурне те, пĕр çын юлмиччен, пĕтерсе тăкмалла.

Задача çăмăл мар. Анчах пирĕн халăх темĕнле йывăр задачăсене те пурнăçа кĕртнĕ, темĕнле йывăр лару-тăрура та çĕнтерӳçĕ пулса тухма вĕреннĕ.

Пирĕн Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ 1941 çулти ноябрĕн 7-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар парадĕнче тухса калани хăйĕн сăмахĕнче пирĕн совет халăхĕн чĕринчи çĕнтерӳ шанчăкне талах та ытларах çĕклерĕ.

«Пирĕн пĕтĕм çĕршыв, — тет Сталин юлташ, — пирĕн çĕршыври халăхсем пурте хамăрăн çарсене, хамăрăн флота тĕрек парса тăраççĕ, нимĕç фашисчĕсен захватчикла кĕтĕвĕсене çĕмĕрсе тăкма çарпа флота пулăшаççĕ. Çынсем тĕлĕшпе пирĕн резервсем вĕçĕ-хĕрри сĕр нумай. Аслă Ленинăн хăвачĕ тата унăн çĕнтерӳллĕ ялавĕ пире халĕ, 23 çул ĕлĕкрех хавхалантарнă пекех, отечественнăй вăрçă туса пыма хавхалантараççĕ».

Сталин юлташăн докладĕпе Хĕрлĕ Çар парадĕнче калана сăмахĕ совет воинĕсен фронтри паттăрлăхне, совет ĕççыннисен тылри производствăллă хастарлăхне çĕнĕ вăй-хăват кӳрсе çулăмлантарчĕç.

Çĕршыври мĕнпур ĕççыннисем пекех, Чăваш республикинчи рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем те çулпуçăн сăмахĕсем çине çĕнтерӳсем туса ответлеççĕ. Çĕмĕрлери, Канашри, Куславккари тата республикăри ытти предприятисенче Октябрь уявĕ умĕн пуçарса янă социализмлă ăмăрту çĕнĕ хăватпа сарăлса пырать. Куславкка заводĕнчи мастер Карелов юлташ рабочисен митингĕнче завод коллективĕн шухăш-кăмăлне каласа панă:

—Сталин юлташ,—тенĕ вăл,—хамăр çĕршыври обстановкăна тĕплĕн çутатса панă. Вăрçă хăрушлăхĕ ӳснине кăтартса панипе пĕрлех, ирсĕр тăшмана çĕмĕрсе тăкмалли çула та уçăн кăтартса панă. Пирĕн задача — продукцие хăвăрт тата пысăк пахалăхпа туса кăларасси пулса тăрать. Эпĕ пĕр браксăр ĕçлеме, продукци ытларах кăларма пулатăп.

Çапла калать паян кашни рабочи, кашни колхозник.

Пирĕн çĕршыва чуралăха кĕртсе ӳкерес шутпа сĕмсĕрленсе кĕнĕ нимĕç оккупанчĕсене пурне те, пĕр çын юлмиччен, пĕтерсе тăкмалла пирĕн Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота хамăрăн пĕтĕм çĕршыв енчен татах та ытларах пуллăпа пыни кирлĕ. Пирĕн предприятисенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, фронта валли пăшалсемпе орудисем, самолетсем, тупăсем, миномĕтсем, пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассем ытларах та ытларах тумалла. Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен уйхирĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, фронтпа çĕршыв валли тырпул, аш-какай, промышленность валли чĕртавар ытларах та ытларах памалла. Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли ăшă тумтирсем ытларах та ытларах памалла.

Сталин сăмахĕсем çĕнтерӳ патне чĕнеççĕ. Партипе совет, комсомолпа профсоюз организацийĕсем массăсене организациленĕ тĕлĕшпе татах та лайăхрах ĕçлемелле. Сталин чĕнĕвĕпе хавхаланнă ĕççыннисен пуçарулăхĕпе тавăрулăхĕ пысăк. Çав пуçарулăхпа тавăрулăха лайăх ертсе пымалла. Большевикла агитаторсем, пропагандистсем Сталин юлташ сăмахĕсене — пирĕн чăнлăхпа тĕрĕслĕх сăмахĕсене кашни совет çыннин чĕри патне илсе ситермелле. Сталин юлташăн докладĕпе Хĕрлĕ Çар парадĕнче калана сăмахне кашни предприятире, кашни колхозра, кашни бригадăпа звенора сӳтсе-явса, практикăлла ĕçпе ответлемелле.

Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсене çĕнтерӳ патне чĕнсе пирĕн аслă полководец Сталин юлташ çапла калать:

«Çак вăрçăра сире пирĕн ĕлĕкки аслă тăвансен—Александр Невскин, Димитрий Донскойăн, Кузьма Мининăн, Димитрий Пожарскин, Александр Суворовăн, Михаил Кутузовăн паттăр сăнарĕсем хавхалантарса пыччăр! Сире аслă Ленинăн çĕнтерӳллĕ ялавĕ çул кăтартса пытăр!

Нимĕç захватчикĕсене пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкассишĕн!

Нимĕç оккупанчĕсене — вилĕм!

Пирĕн мухтавлă тăван çĕршыв, унăн ирĕклĕхĕ, унăн никама пăхăнманлăхĕ сывă пултăр!

Ленин ялавĕ айĕнче тăрса — малалла, çĕнтерӳ патнелле!»

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 8-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 8-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçусем туса пынă. Фронтăн Крымри участокĕнче уйрăмăнах халр çапăçусем пулнă.

Тĕплĕн палăртнă даннăйсем тăрăх, ноябрĕн 6-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата противникăн аэродромĕсенче нимĕçсене малтан хăтартнă пек 55 самолет мар, 104 самолет пĕтерсе тăкнă.

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче нимĕçсен 29 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн пĕр самолет пĕтнĕ.

* * *

Ленинград тата Сурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче çапăçакан пирĕн авиачăсем ноябрĕн 6-мĕшĕнче пехотăпа çар грузĕсем турттарса пыракан 240 ытла автомашинăна, темиçе оруди, миномĕтсен батарейине пĕтерсе тăкнă, нимĕç пехотине пĕр батальон ытла сапаласа ярса пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă докладра тата вăл ноябрĕн 7-мĕшĕнче Хĕрлĕ площадьре Хĕрлĕ Çар парадĕнче калана сăмаха ответлесе, совет çĕршывĕнчи ĕççыннисем çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ. Мускаври «Освобожденный труд» фабрикăри стахановка-прядильщица Колчина юлташ çапла калана:

«Сталин юлташ сăмахĕ эпир ылханлă тăшмана çĕнтересседе шаннине татах та ытларах çирĕплетрĕ. Эпир татах та лайăхрах ĕçлĕпĕр, хамăрăн пĕтĕм вăя фронта парăпăр».

Мускаври «Проводник» заводри рабочисем, пурте пĕр çын пек пулса:

— Сталин юлташ пирĕн шухăшсемпе ĕмĕтсене каласа панă,—теççĕ.

Стахановец Годовиков юлташ цехри хăйĕн юлташĕсене хĕрӳллĕн чĕнсе калана.

— Сталин юлташăн докладĕпе çăмахĕ çине пирĕн унă хут ытларах вăй каларса стахановла ĕçленипе ответлемелле. Пирĕн Хĕрлĕ Çар валли, Мускава паттăрăн хӳтĕлекенсем валли мĕн чухлĕ продукци кирлĕ, çавăн чухлĕ парар, çакăн пек ĕçлер юлташсем,—тенĕ вăл. Унăн сăмахне пурте ырланă.

Мускаври «Аренс» заводри рабочисемпе инженерно-технически работниксем çулпуç сăмахне стахановла çĕнĕ обязательствăсем илнипе ответлеççĕ.

— Халĕ эпĕ нормăна 250 процент тултаратăп, анчах та паянхи обстановкăра ку çителĕксĕр,—тенĕ стахановец Канашков юлташ.—Фашистла захватчиксене хăвăртрах пĕтерсе тăкмашкăн Хĕрлĕ Çара пулăшас тесен, пирĕн пурин те татах та лайăхрах, татах та тухăçлăрах ĕçлемелле. Эпĕ вăрçă пĕтичченех нормăна 350 процентран кая мар тултарса пыма пулатăп.

Сталин юлташăн докладĕпе сăмахне ответлесе, Мордва АСС Республикинчи ĕççыннисем татах та лайăхрах ĕçленипе Хĕрлĕ Çара вăй-хала шеллемесĕр пулăшса пыма пулнă. Саранскри консерва комбинатĕнчи, сӳс-кантăр комбинатĕнчи, махорка, çĕвĕ фабрикисенчи тата ытти предприятисенчи рабочисем хăйсен завочĕсенче продукци туса кăларассине ӳстерме обязательствăсем илеççĕ. Çĕвĕ фабрикинчи стахановкăн Лазарева юлташăн упăшки фронтра хăюллисен вилĕмĕпе вилнĕ, Лазарева юлташ çапла калана:

— Эпир, Хĕрлĕ Çар боецĕсен арăмĕсемпе амăшĕсем, Сталин юлташ чĕннĕ пек, алăсене канăç памасăр ĕçлесе фронта мĕн кирлине пурне те парса тăрăпăр, урса кайнă фашистсене хăвăртрах пĕтерсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшăпăр. Пирĕн стахановла ĕç пĕтĕм совет халăхĕ туса пыракан кĕрешӳре, пирĕн тĕрĕс ĕç çĕнтересси патне илсе пырать.

Ноябрĕн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 9-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç мĕнпур фронтсенче çапăçусем туса пынă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче çапăçакан пирĕн кавалерин пĕр часĕ тăшман çине ăнăçлă атака туса противник пехотин икĕ ротине ытла пĕтерсе тăкнă тата танксене хирĕç пемелли 7 оруди, 6 пулемет, 5 миномет, патронсем, винтовкăсем, лашасем, урапасемпе продовольстви нумай тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн боецсен группи, Яковенко политрук ертсе пынине, нимĕç салтакĕсен ротине çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Совет артиллерисчĕсем тăшмана хирĕç паттăрăн çапăçаççĕ, хăйсен орудийĕсенчен тĕл персе, тăшмана пĕр теллемесĕр çапа-çапа çĕмĕреççĕ. Оруди командирĕн Злобин сержантăн расчечĕ, ноябрĕн 6-мĕшĕнче, Хĕвеланăç фронтĕнчи участокенчен пĕринче противник танкĕсен атакине сире-сире ярса, тăшманăнне 8 танк пĕтерсе тăкнă. Хĕвеланăç фронтĕн тепĕр участокĕнче, оруди командирĕн Корцуковăн расчечĕ ноябрĕн 7-мĕшĕнче нимĕçсенне 6 танк пĕтерсе тăкнă. Дивизи политотделĕн инструкторĕ Дорохов, тăшман танкĕсем курăнса кайсан, танксене хирĕç пемелли туппа уçă позицине илсе тухнă та, нимĕçсен 3 танкне умранах персе аркатнă.

* * *

Карело-Финн ССР Республикинчи партизансем фашистла захватчиксене хирĕç ăнăçлă кĕрешеççĕ. Нумаях пулмасть, Р. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ тăшманăн автоколонни вырнаçнă яла çĕмĕрсе кĕнĕ те, автомашинăсем çине гранатăсем тата çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем вăркăнтара-вăркăнтара ывăтнă. Партизансем тăшманăнне 18 автомашина тата 20 мотоцикла çити пĕтерсе тăкнă. Салтаксем хушшинче паника пуçланнă. Партизансем 30 салтакран кая мар пере-пере ӳкернĕ, хăйсемпе пĕрле 8 автомат тата 25 винтовка илсе тухса пытаннă.

Çав кунах партизансен разведки отряд командирне фронт еннелле белофинсен ушкăнĕ пыни çинчен пĕлтернĕ. Партизансем засада тунă. Белофинсем пырас çул çинче нимĕçсенчен тытса илнĕ минăсене нумай хурса тухнă. Минăсем хурса тухнă çул çинче тăшманăн бронемашини тата финн салтакĕсем ларса пыракан икĕ автомашина взрыв пулса арканса кайнă. Партизансем персе тăнине финсен отрячĕ сапаланса кайнă. Карело-финн партизанĕсем захватчиксене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте тăшманран тытса илнĕ минăсемпе анлăн усă кураççĕ. Вĕсем час-часах кĕпершем, çулсем çине, уйрăм çуртсенче минăсем хурса хăвараççĕ. Пĕр октябрь уйăхĕнче кăна партизансем хурса хăварнă минăсем çине пырапыра тăрăнса, тăшманăн 9 броневикĕ, 60 автомашинăна яхăн взрыв пулса арканнă тата нимĕçсемпе белофинсен салтакĕсемпе офицерĕсем 280 çын ытла пĕтнĕ.

* * *

Голландири фабрикăсемпе заводсенче, чугунçулпа шыв транспортĕнче саботажсемпе диверсиллĕ актсем шучĕ кунран-кун ӳссе пырать. Алмело хулинчи пир-авăр фабрикисенче октябрĕн 30-мĕшĕнче тата ноябрĕн 3-мĕшĕнче пушарсем пулнă, Германи çарĕ валли хатĕрленĕ пир-авăр çав пушарсенче çĕршер шăн метр çунса кайнă. Куквăн-Холланд портĕнче патриотсем организациленĕ взрыва пула, хăватлă темиçе зенитнăй установка тата проекторсем, нимĕçсем тĕплĕн маскировка туса пытарса лартнăскерсем, стройран тухнă. Çавăнтах ноябрĕн 2-мĕшĕнче боеприпассем тата çар снаряженийĕ тиенĕ баржа шыва путнă. Голланди патриочĕсем халăх хушшинче пур çĕрте те нимĕçсемшĕн сăтăр тума чĕнекен листовкăсем нумай сарăççĕ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ А. Я. ВЫШИНСКИЙ юлташ дипломатиллĕ корпуса йышăнни

Кăçалхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче Октябрьти Социализмлă Аслă революци 24 çул тултарнă ятпа ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ А. Я. Вышинский юлташ Куйбышев хулинче хăй патĕнче дипломатиллĕ корпуса йышăннă.

Йышăнура дипломатиллĕ корпус, Великобритани, Польшăн тата Чехословакин çар миссийĕсен руководителĕсем, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен специальнăй миссийĕ, ютçĕршыв корреспонденчĕсем, çавăн пекех тата М. Г. Первухин, А. Ф. Горкин, В. Н. Меркулов, В. Г. Деканозов, С. А. Лозовский, И. С. Исаков, Ю. М. Каганович юлташсем, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн, Оборона Халăх Комиссариачĕн, Тинĕс-Çар Флот Халăх Комиссариачĕн, Тулашри Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕн ответлă сотрудникĕсем, чылай совет писателĕсем пулнă.

Обязательствăсене тултарнă колхозсем

□ ЭЛЕК. Хураватри «Заветы Ильича» колхоз авăн çапса пĕтернипе пĕр вăхăтрах государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра тултарассишĕн тăрăшса ĕçлерĕ. Колхоз государство умĕнчи тĕштырă тата пахча çимĕçĕн поставкисене, çавнашкалах аш-какай, сĕт-сӳ, çамарта тата ытти обязательствăсене те тултарчĕ. **Н. СМИРНОВ.**

□ ИШЛЕЙ. Районри 50 колхозра кăçалхи çулпăн государствăна аш-какай парса татса, ситес çулпăн пама тытăннă. «Авангард», «Красная Горка» тата «Ударник» колхозсем 1942 çулти аш-какай обязательствисене 57—87 процента çити тултарнă.

Е. ЮРИН.

Австралире хĕрлĕ ялавсем çакнă

ЛОНДОН, ноябрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Сиднейри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 7-мĕшĕнче Октябрьти революцин уявĕ ячĕпе Австралире пур çĕрте те официальнăй йĕркепе ССР Союзĕн ялавĕсене çакнă. ССР Союзĕн ялавĕсене çакнă правительство сурчĕсен шутĕнче федеральнăй парламентăн сурчĕ пулнă.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕ г. Рузвельтпа СССР Совнаркомĕн Председателĕ Сталин юлташ пĕр-пĕринпе çырусем парса илни

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Государственнăй Департаменчĕ Рузвельтпа Сталин пĕр-пĕрин патне янă çырусен содержанине пичетлесе кăларнă. Рузвельт октябрĕн 30-мĕшĕнче çырнă çырура çакна пĕлтернĕ пулнă:

«Эпĕ Мускаври конференцин протоколĕпе паллашрăм: Мисси членĕсем манпала пĕрле тĕплĕн сӳтсе-явăç. Пĕтĕм çар пурлăхĕпе вооруженин мĕнпур средствисене эпĕ ырларăм тата вĕсене май пур таран хăвăртрах вырăна çитерме хушрăм.

Нимĕн вăраха хăвармасăрах материалсене тăратма хушнă. Вăл материалсене мĕн май пур таранах ытларах тăратмалла.

Ку ĕçри укçа-тенкĕ йывăрлăхĕсене сирсе ярас пирки те халĕх тивĕçлĕ мерăсем йышăнатпăр. Вăл мерăсем вооруженине кивçен е арендăна парасси çинчен йышăннă закон тăрăх, çар поставкисене 1 миллиард доллар таран тăратма май парассĕ. ССР Правительстви хунпа килĕшет пулсан, эпĕ ку тĕлĕшпе пулакан парăмран нимĕнле процент та илмелле мар тума хушатăп. Совет правительстви вăл параççĕ. Ку çĕрте Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви ячĕпе снабжени ыйтăвĕсем тăрăх Мускавра пухăнăвă конференцине Эсир тата Сирĕн сотрудникăрсем хăвăрт ирттернишĕн тав тăватăп, çакнашкалах çав конференци решенийĕсенчен тухса тăракан пур обязательствăсене те пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртетпĕр тесе шантаратăп.

Кăмăлăр пулсан, Эсир нимĕн иккĕленмесĕрех тӳрех мантала сыхăнасса шайса тăратăп».

Государственнăй Департамент Сталин юлташ ноябрĕн 4-мĕшĕнче Рузвельт çыруне хирĕç пана ответа пичетлесе кăларнă.

СТАЛИН ЮЛТАШ ПРЕЗИДЕНТ РУЗВЕЛЬТ ÇЫРУНЕ ХИРĔÇ ПАНĂ ОТВЕТ

Кунта эпир ССР Союз Совнаркомĕн Председателĕ Сталин юлташ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕ Рузвельт 1941 çулти октябрĕн 30-мĕшĕнче янă çырăва хирĕç ноябрĕн 4-мĕшĕнче панă ответа пичетлетпĕр:

«Господин Президент! Сирĕн посланин текстне эпĕ илеймен пулсан та, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен посолĕ г. Штейнгард ноябрĕн 2-мĕшĕнче Бышинский урлă мана асран тухми записка çырса парса, Эсир манăн ятпа янă посланин содержанине пĕлтерчĕ. Çакăнпа пĕрлех эпĕ нимĕнрен малтан виçĕ державăсен Мускавра пулса иртнĕ конференци ĕçĕсене Эсир панă хăнăхпала пĕтĕмĕшпех килĕшни çинчен пĕлтернине ăнăçлă иртни г. Гарриманпа г. Бивербрук тăрăшнинчен нумай килчĕ: вĕсем конференци ĕçĕсене кĕске вăхăтрах ăнăçлăн туса ситерес тесе пĕтĕм вăя хурсах тăрăшрĕç.

Эсир: конференци постановленийĕсем ытлашшипех пурнăçланса пырĕç, тесе пĕлтернишĕн Сире Совет правительстви чĕреренех тав тăвать.

Çар хатĕрĕсемпе чĕртавар материалĕсем тӳлесе илме Эсир Совет Союзне пĕр миллиард долларлăх кивçен укçа памалла тунине Совет правительстви, господин Президент, пĕтĕм чĕререн хăпăлласа йышăнать. Ку вăл пурсăмăршăн та хаяр тăшман пулса тăракан юнлă гитлеризма хирĕç кĕрешес пысăк та йывăр ĕçре Совет Союзне калама çук пысăк пулăшу пани пулса тăрать.

ССР Правительстви хушнине эпĕ Эсир Совет Союзне вăрçă чăрăнни хыççăн 5 çултан тӳлеме пуçласа, ситес 10 çул тăршшĕнче тӳлесе татмалла йĕркепе пăракан çаемăн условийĕсемпе пĕтĕмĕшпех килĕшни çинчен пĕлтеретĕп.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене кирлĕ таварсемпе чĕртаварсем пирĕн мĕнлисем пур, çавсене пурне те Совет правительстви Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене тăратас енчен мĕн кирлисене пĕтĕмпех тума хатĕр.

Эпир пирĕн иксĕмĕр хушăмăрта, обстоятельствăсене кура, халех тӳррăн сыхăнса тăма кирлĕ тесе сĕнни çинчен калас пулсан, эпĕ вăл сĕнĕве хапăл тусах йышăнатăп тата вăл сыхăнăва пурнăçлас тĕлĕшпе мĕн тумаллине пĕтĕмĕшпех тума хатĕр.

Пĕтĕм чĕререн хисеплесе—**СТАЛИН».**

Рузвельт распоряженийĕ

НЬЮ-ИОРК, ноябрĕн 8-мĕш. Рузвельт вооруженине кивçен е арендăна парасси çинчен калакан закона пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлеме уйăрнă уполномоченнăя Ситтинга, вооруженине кивçен е арендăна парасси çинчен йышăннă законра кăлартнă пек, Совет Союзне халех васкавлăн пулăшу пама тытăнма хушнă.

Рузвельт Совет Союзне кивçен укçа парасси çинчен пĕлтерни

ЛОНДОН, ноябрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Англири радио пĕлтернĕ тăрăх, США президенчĕ Рузвельт США Совет Союзне процентсăр 250 миллион фунт стерлинг (вăл пĕр миллиард доллар пулать) кивçен укçа парать, тесе пĕлтернĕ. Çав кивçен панă укçана 10 çул хушшинче вырăс чĕртаварĕпе тӳлесе татмалла. Кивçен илнĕ укçана вăрçă пĕтнĕ хыççăн пилĕк çултан тӳлеме тытăнмалла пулать.

Ленинградран панă черетлĕ радиопередача

Ленин хулине—Октябрьти Социализмлă Аслă Революцин сăпкине—паттăрăн сыхлакансен сасси радио тăрăх янăрарĕ. Пĕтĕм çĕршывпа пĕрле Ленинград Октябрĕн 24-мĕш уявне палласа турĕ. Ноябрĕн 7-мĕшĕнче ирхине Ленинград Мускава—Хĕрлĕ площадьри традициллĕ парада, аслă Сталинăн сассине итлерĕ.

Ленинградра уяв фронтри хаяр обстановкăсенче иртрĕ. Хула фронт пулса тăчĕ, уяв та фронтри пек пулчĕ. Хула çинче артиллери канонадин сасси янраса тăнă: Балтика флочĕн карапĕсем фашистсене вутлă çулăмпа çунтарнă. Танкистсемпе пехотинецсем Ленинград фронтĕнче аталăна кĕнĕ.

Ленинграда хӳтĕлекенсем Октябрĕн 24-мĕш уявне героизмăн тĕлĕнмелле чаплă примерĕсемпе паллă тунă. Кузнецов юлташăн подразделенийĕнчи артиллеристсем ăнăçлă разведка тунă ĕççăн тăшманăн батарейине пĕтерсе тăкнă. Бусыгин снайпер, Сталин юлташ сăмахне итленĕ хыççăн, малти позицисене кайнă та тĕл персе тăватă фашиста пĕтерсе тăкнă.

Окопсемпе блиндажсенче калаçусем пулнă тата хаçатсем вуланă. Сталин юлташăн историллĕ выступленийĕ малаллахи кĕрешӳсемпе çĕнтерӳсене тума çĕнĕ хăватлă вăй панă.

Кăнтăрла Ленинградран фронта рабочисен вунпăр делегацийĕсем тухса кайнă. Войскăсен подразделенийĕсенче нумай сыннă митингсем пулса иртнĕ. Митингсенчен пĕрине пленка çине сырса илнĕ, ăна ĕнер Ленинградран радио тăрăх пĕтĕм çĕршыв итлерĕ.

«Красное Знамя» фабрикăра ĕçлекен Анна Никифоровна Захарова боецсене амăшĕсенчен, арăмĕсенчен тата ачисенчен уяв ячĕпе саламланă. Вăл боецсене Ленинградри хĕрарăмсем кунĕнçĕрен, вăя хĕрхенмесĕр, фронт валли ĕçлени çинчен каласа кăтартнă. «Ес мĕн чухлĕ пытать, эпир çавăн чухлĕ ĕçлетпĕр,—тенĕ вăл.—Эпир йăлтах Сире валли, фронт валли тăватпăр.

Мухтавлăн çапăçнăшăн, пирĕн чаплă хулана хӳтĕленĕшĕн чĕререн тав тăватпăр, Сталин юлташ вĕрентнĕ пек çапăçăр. Фашистсене вутпа çунтарăр, снарядсемпе ăмалăр, штыкпа ваклăр, прикладпа çапăр, кирлĕ пулсан,—гитлерла бандитсен пырĕсене шăлсемпе кышла-кышла татăр».

Захарова юлташ боецсене пирĕн халăха кӳнĕ хуйхă-суйхăшăн фашистсене тавăрма чĕнет.

Сержант Быков боецсемпе командирсен ячĕпе Ленинградри рабочисене Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 24 çул тултарнă ятпа саламлама тата Ленин хулине хӳтĕлекенсем тăшмана çĕнтерме кирлине пурне те тума пулни çинчен пĕлтерме ыйтать.

Пирĕн праздника фашистсем тĕксĕмлетме шутларĕç,—тет Быков юлташ,—вĕсем наступлени тума хăтланса пăхрĕç, анчах та вĕсен çакăнтан нимĕн те тухмарĕ. Бандитсене пысăк çухатусем кӳрсе сирсе пăрахрăмăр.

Ноябрĕн 6-мĕшпе 7-мĕш хушшинче çĕрле уйрăмăнах Романов юлташăн подразделенинчи боецсем хăюлăхпа паттăрлăх кăтартрĕç. Быков юлташ боецсемпе командирсен ячĕпе çапла калать:

— Эпир хамăрăн тăван çĕршыва юлашки сывлăш тухичченех сыхлама, фашистсене ним кĕрхенӳсĕр пĕтерсе тăкма пулатпăр.

Обязательствăсене тултарнă колхозсем

□ ЭЛЕК. Хураватри «Заветы Ильича» колхоз авăн çапса пĕтернипе пĕр вăхăтрах государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра тултарассишĕн тăрăшса ĕçлерĕ. Колхоз государство умĕнчи тĕштырă тата пахча çимĕçĕн поставкисене, çавнашкалах аш-какай, сĕт-сӳ, çамарта тата ытти обязательствăсене те тултарчĕ. **Н. СМИРНОВ.**

□ ИШЛЕЙ. Районри 50 колхозра кăçалхи çулпăн государствăна аш-какай парса татса, ситес çулпăн пама тытăннă. «Авангард», «Красная Горка» тата «Ударник» колхозсем 1942 çулти аш-какай обязательствисене 57—87 процента çити тултарнă.

Е. ЮРИН.

Войскăсен Хĕрлĕ площадьри парачĕ

ПАРАДРА 200 ТАНК ПУЛНĂ

Октябрьти Социализмлă Аслă революци 24 çул тултарнине Мускав йывăр та хаяр обстановкăра уявласа иртернĕ. Пирĕн çĕр çинче нимĕç захватчикĕсем чĕртсе янă çавтери пысăк вăрçăн пушарĕ ялкăшать. Гитлерла йыткĕтĕвĕсем урса кайсах пирĕн тăван çĕршыв чĕри патне — Мускав патне талпăнаççĕ. Пирĕн хулана хĕле кĕричен тытса илес тесе тăшман мĕнпур вăйне хурать, мĕншĕн тесен хĕл ăна нимĕнле ырлăх та сунмасть.

Нимĕç çарĕ тăрăх пани приказенче фашистла войскăсем Мускава пырса кĕмелли срока октябрĕн 16-мĕшне палăртнă пулнă. Хĕрлĕ Çар фашистла бандăн планĕсене аркатса ячĕ. Германин иртĕхсе кайнă правителĕ тепĕр срока ноябрĕн 7-мĕшне палăртнă. Çак кун вăл Мускаври Хĕрлĕ площадьре фашистла воякăсен парадне туса иртерме кăшлайса сăмах панă. Анчах та çакă вăл гитлерла кăшлайăк генералсем ĕмĕтленнинчен кăна килмен. Фашистла йыткĕтĕвĕсем столицăна кĕме малтанхи срока палăртнă чухне Мускавран мĕнтери аякра пулнă, Аслă Октябрь 24 çул тултарнă кун та çавăн пекех аякра тăнă.

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче Мускаври Хĕрлĕ площадьре Хĕрлĕ Çар войскисен традицийлĕ парачĕ пулса иртнĕ. Гранит трибунăсем умĕнче, çак чаплă кун яланхи пекех, совет халăхĕн хĕçпăаллă вăйăсем йĕркеллĕн тăрса тухнă. Яланхи пекех Ленин мавзолейĕн трибунин çинче Сталин тăнă.

Çĕрле Мускав çине йывăр пĕлĕтсем таккишше капланса килнĕ. Урамсем, площадьсем тата пур çийĕсем юрпа витĕннĕ. Тул çутăлас умĕн вăйлă çилтăман — сывхарса килекен хаяр хĕлĕн шĕрремĕш хыпарçи çĕкленнĕ. Çав хаяр хĕл сывхарассинчен фашистсем тискер-кайăксем пек хăраса чĕтресе тăраççĕ. Вырăс çĕрĕ хăйĕн нацийĕ аслă праздникĕн кунĕнче хĕле кĕчĕ.

Хĕрлĕ площадь. Кашни совет çынни чĕришĕн мĕн пек паллă та хаклă вăл! Кунта, Кремлĕн ватă стенисем патĕнче, Октябрьти революцине тăвакан тата ăна ертсе пыракан аслă Ленинăн ӳчĕ вырттăр. Çак площадьре партипе правительство совет халăхĕн вăйĕсене пăхса тухассине тăтăшах туса пынă. Çак площадьре совет халăхĕ хăй çыннисен иксĕлми вăй-хăватне, хăйĕн тăван партине пĕтĕм чĕререн юратнине, юратнă тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн парăнса тăнине кăтарта-кăтарта панă.

Паян та çак площадь халичченхи пекех аслă та чаплă. ГУМ çурчĕ çинче уяври анлă лозунгсем, вĕсен хушшинче — Ленинăн тата Сталинăн портречĕсем. Гранит трибунăсем çинче правительство членĕсем, партипе совет организацийĕсен работникĕсем, хозяйственниксем, стахановецсем, совет интеллигенцийĕн представителĕсем, Хĕрлĕ Çар командирĕсем тăраççĕ. Совет пичечĕн, искусствăн представителĕсем чылай. Мавзолей трибунисен флангĕсем çинче киноператорсемпе фотографсем хăйсен вырăнĕсене йышăннă. Халăх кĕтет.

Москворецк кĕперĕ патĕнчен пуçласа Истори музейĕн çурчĕ патне çитиччен пĕтĕм площадь тăрăх войскăсем тăрса тухнă. Ротăсемпе батальонсен тăваткăлăсем пĕр хускалмасăр тăраççĕ. Хаяр çил çунчи тусана сывлăшалла çавăрттарса çĕклет. Çӳлелле кăнтарнă штыксем çинче шурă пасăн йĕшписем йăлтăртатаççĕ. Йĕри-тавра тăрса тухнă хуралăн речĕсем тип-тикĕсĕн те тӳрĕн тăраççĕ. Войскăсем кĕтеççĕ.

Акă сасартăк пĕтĕм площадь хускалса илчĕ. Сивĕ сывлăшра хаваслăн алă çупнисем янăраса каяççĕ, площадьри шăплăха савăнăçлă сасăсем хускатрĕç. Мавзолейăн трибуни çине Сталин, Молотов, Каганович, Микоян, Берия, Маленков, Щербаков, Кузнецов, Косыгин, Попов, Черноусов, Пронин, Павлюков, Щаденко тата ытти юлташсем хăпараççĕ.

Халăх тата воинсем хăйсен çулпуçне мĕнпур чĕрери хаваслăхпа, тулли кăмăлпа саламлаççĕ. Площадь тăрăх нумай сасăллăн «урра» кăшкăрни янăраянăра каять, большевиксен партине тата Сталин юлташа мухтакан сасăсем илтĕне-илтĕне каяççĕ. Трибуна çинче тăракан çынсем мавзолей трибуни çинче тăракан çынсене саламласа алă çупаççĕ, кусем хăйсем енчен халăха тата войскăсене саламласа алă çупаççĕ. Сталин юлташ халăх юратнине тата чĕререн кăмăлланине хирĕç аллине çӳле çĕклесе ответлет.

Спасски башня çинчи сехет саккăр çаптни площадь тăрăх янăраса каять.

— Парад, смирно! — тенĕ сасă илтĕнет.

Спасски башня хапхинчен чăмăр та вĕри утпа СССР Оборона Халăх Комиссарĕн Заместителĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Буденный юлташ тухать. Ăна хирĕç парада командир пулса ертсе пыракан генерал-лейтенант Артемьев утпала сиктерсе пырать.

Рапорт йышăнсан Буденный юлташ генерал-лейтенантпа пĕрле парада хатĕрленсе тăнă войскăсене пăхса, вĕсене сывлăх сунса çавăрнать. Совет Союзĕн Маршалĕ саламланине хирĕç боецсем хаваслăн «урра» кăшкăрса ответлеççĕ. Войскăсене пăхса çавăрăннă хыççăн, Буденный юлташ мавзолей патнелле пырать те лаши çинчен çамăллăн сиксе анса трибуна çине хăпарать.

Площадьре чаплă шăплăх пуçланать. Рупорсем площадь тăрăх Сталин юлташăн уçăмлă та витĕмлĕ сăмахĕсене сапалаççĕ:

— Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем, рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем, интеллигентла ĕçĕн работникĕсем, пирĕн тăшманăн тылĕнче вăхăтлăха нимĕç захватчикĕсен пусмăрĕ айне кĕрсе ӳкнĕ тăвансем, нимĕç захватчикĕсен тылĕсене çĕмĕрсе аркатакан пирĕн мухтавлă партизансемпе партизанкăсем!

Войскăсен речĕсенче те, трибунăсем çинче те — кăмăн çак самантра Хĕрлĕ площадьре пулма телей килнĕ, çавсен пурин те сăн пичĕсенче — çакăнта, мĕнпур ĕç этемлĕхĕн туйăмĕсем туртăнакан вырăнта пулма тӳрĕ килнĕ çынсен сăн-пичĕсенче, — капшин сăнпитĕнче тарăннăн хумханни, кăмăл çулăмлăн çĕкленни, хаваслăн кĕтсе тăни çинчен. Кашни хăйĕн мĕнпур чĕрипе хумханса çулпуçăн, тусăн, учителĕн— аслă та тăван Сталинăн сăмахĕсене тимлĕн итлет.

Сталин юлташ совет çыннисене Совет Правительствин тата большевиксен партин ячĕпе саламлать, вĕсене Октябрьти Социализмлă Аслă революци 24 çул тултарнă ятпа ырă сывлăх сунать. Вăл çак чаплă уява йывăр условисенче уявласа ирттерме лекни çинчен калать, вăл пирĕн çĕршыв татах та йывăртарах положенире тăнă кунсем çинчен те аса илтерет. Вăл 1918 çул çинчен, ун чухнехи интервенци çинчен, советсен çамрăк республики çине 14 государство тапăнса килни çинчен тата çав интервентсене çапса çĕмĕрни çинчен, хамăран çухалнă территорисене каялла туртса илни çинчен, совет çĕршывĕ çĕнтерӳ туни çинчен калать.

— Аслă Ленинăн хăвачĕ тата унăн çĕнтерӳллĕ ялавĕ пире халĕ, 23 çул ĕлĕкрех хавхалантарнă пекех, отечественнăй вăрçă туса пыма хавхалантараççĕ.

Çак самантра çулпуç сăмахне итлекен кашни çын унăн сăмахĕсенче иксĕлми шанчăк пуррине — нимĕç захватчикĕсене çĕнтерес, фашистла Германия пурпĕрех арканса каяс çирĕп шанчăк пуррине туйса тăнă. Çулпуçăн витĕмлĕ те çулăмлă сăмахĕ пурне те нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç татăклă çĕнтерӳ тăвичченех çапăçăва тухас, Гитлерăн захватчикла кĕтĕвĕсене пĕтерсе тăкас, хамăран тăван çĕршывшăн юлашки сывлăш тухиччен çапăçас хĕрӳллĕ шухăш-кăмăлпа çулăмлантарса çĕклет.

Сталин юлташăн юлашки сăмахĕсем аслати пек «урра» кăшкăрнă хаваслă сасăсемпе витĕнеççĕ. Красноармеецсем хăватлăн саламлани аслă площадь тăрăх пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне çити янăра-янăра каять. Орудисенчен перше салют пани кĕрлет, пĕрлешӳллĕ оркестр хăватлăн та чаплăн «Интернационал» вылять.

Хĕрлĕ Çар часĕсен чаплă маршĕ пуçланать. Барабансем янăрани походри юрăсемпе, халăхăн вăрçă юррисемпе, граждăн вăрçи çулĕсенчех çуралнăскерсемпе, улăпаççĕ. Чаплă парада пуçласа ярса, мавзолей умĕнчен тĕрĕс те тикĕс стройпа артиллери училищинчи курсантсем иртсе пыраççĕ. Вĕсем, хăйсене пуçтаруллă та çирĕп тытаканскерсем, хĕллехи лайăх тумтирсем тăхăннăскерсем, питех те лайăх хĕçпăал тытнăскерсем, пĕр тикĕс утăмпа утса пыраççĕ.

Çакăнта, Хĕрлĕ площаде совет морякĕсен çапăçури хастарлăхне, вĕсен революцилле паха традицийĕсемпе çар ăсталăхне илсе килнĕ моряксен батальонĕсене шавлăн алă çупса кĕтсе илеççĕ. Октябрьти матроссен ывăлĕсем вĕсем столица патне пымалли вырăнсене хăйсен ашшĕсем тунă аслă çĕнтерӳсене хӳтĕлеме, хамăран тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхне тата пуласлăхне хӳтĕлеме килнĕ.

Акă НКВД войскисем, пехотăн батальонĕсем, стрелковăй подразделенисем иртсе пыраççĕ. Малта командирсемпе политработниксем пĕр тикĕс маршпа утаççĕ. Пас тытнипе тата юрпа кĕмĕлленнĕскерсем, хаяр та кĕрнеклĕскерсем, вĕсем Сталин юлташ хăйĕн сăмахĕнче каланă вырăс богатырĕсене аса илтереççĕ. Çак çынсем вĕсем хăйсен аслă тăванĕсене — Александр Невскине те, Димитрий Донскоя та, Кузьма Минина та, Димитрий Пожарскине те, Александр Суворова та, Михаил Кутузова та тивĕçлĕ пулĕç. Паян Хĕрлĕ площадьпе пыракан çак çынсене тăван çĕршыв суратнă, большевиксен партийĕ пăхса çитĕнтернĕ, çапăçура паттăр ĕçсем тума Сталин юлташ хавхалантарнă!

Чаплă парада вĕçлесе, мавзолей умĕнчен Мускав хулинчи рабочисен хĕçпăаллăнăй отрячĕсем, вырăс çĕрĕн мухтавлă ополченецĕн — Кузьма Мининăн ăрувĕсем иртсе пыраççĕ. Вĕсем винтовкăсемпе, атвоматсемпе, ручной пулеметсемпе хĕçпăаллаланнă. Вĕсем патнах çапăçу рубежĕсене тухма, хамăран тăван хулашăн, хамăран аслă тăван çĕршывăн юлашки юн тумламĕ юлмиччен тăрса çапăçма хатĕр.

Оркестр хăйĕн кĕввипе çеммине уллăптарать. Площаде кавалери кĕрет. Çĕнĕ юр çинче эскадронсем тапăртатса пыраççĕ. Тутă та чăмăр, пĕр пек тĕслĕ утсене суйласа илсе уйрăм подразделенисем тунă. Кавалеристсем йĕнерсем çинче пĕр хускалмасăр лараççĕ, хĕçсем çине çĕкленĕ чаççсем ялавĕсем сывлăшра варкăшса пыраççĕ. Эскадронсем хыççăн хăватлăн кĕмсĕртеттерсе пулемет тачанкисем вăркăнса пыраççĕ, вĕсене трибунăсем çинчен тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ.

Майĕпен те çирĕппĕн, флангпа пĕр виçеллĕн моторизованнăй пехота иртсе пырать. Зенитнăй установкăсем вырнаçтарса лартнă автомобильсем пĕр сассăр куса пыраççĕ. Артиллери войскисенчен Мускавра çакăн пек установкăсем уйрăмах чапа тухнă. Зенитчиксем — москвичсен юратнă çынниссем. Сталинла паттăр соколсемпе пĕрле вĕсем тăшман авиацийĕ столица çине килнине сире-сире яраççĕ, хулан мирлĕ кварталĕсем çине вилĕм грузĕ илсе килекен фашистла çăхансен ушкăнĕсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ.

Кремль çинчи сехет ӳççăн янăратса 9 сехет çапать. Площадь тăрăх çаплах артиллери пырать-ха. Зенитнăй артиллери, танксене хирĕç пемелли артиллери, йывăр артиллери... Артиллеристсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсемшĕн аçа-çиçĕм пулса тăраççĕ. Вĕсем ылханлă оккупантсене пĕр хĕрхенӳсĕр пĕтерсе пыраççĕ, фашистла йыткĕтĕвĕсем хĕссе килнине çирĕппĕн те паттăрăн сире-сире пăрахаççĕ, гитлеровецсен ретĕнче вилĕмпе паника сарăçĕ.

Совет çар техникин маршне вĕçлесе, площаде танксем йышăнаççĕ. Пĕтĕмпе 200 танк! Малтан юрпа витĕннĕ асфальт тăрăх хăйсем хыççăн çилтăман кăларса пĕчĕк танкеткăсем иртсе кайрĕç. Вĕсем хыççăн çăмăл танксем, вăтаммисем, йывăрриссем пыраççĕ. Çакă хурçă улăпсем фашистсем хĕссе килнине çĕмĕреççĕ, тăшман пуçĕ çине хаяр вилĕм яраççĕ, тăшманăн техникипе чĕрĕ вăйĕсене таптаса лӳчĕреççĕ. Çакăн пек хĕрхенӳсĕр машинăсем пирĕн мĕн чухлĕ ытларах пулаççĕ, фашистла ирĕсĕрсене эпир çавăн чухлĕ хăвăртрах та ăнăçлăнрах таптаса аркататпăр.

Сывлăшри çурада туса ирттерме Мускав патĕнчи аэродромсем çинче 300 самолет ытла хатĕрлесе лартнă пулнă. Анчах çанталăк питех те начар пулнă пирки сывлăшра хаяр çилтăвăл кăларакан машинăсен парачĕ пулман.

Танксем иртсе пĕтсен парад вĕçленнĕ. Парад пирĕн çынсен резервисем вĕçĕмсĕр нумайййине, пирĕн хĕçпăал тăлăшĕнчен ытлашши пысăк çитменлĕх çуккине кăтартса пачĕ. Совет халăхĕн пăшал тарĕ яланах çителĕклĕ те тивĕ тăнине, пирĕн çинче аслă Ленинăн çĕнтерӳллĕ ялавĕ хăватлăн ялкăшса тăнине, нимĕç захватчикĕсене пуçĕпех çапса аркатас вăхăт инçе юлманнине, пирĕн çул çинче темĕнле йывăрлăхсем тăрас пулсан та, эпир пурпĕрех çĕнтерессине кăтартса пачĕ парад.

Партипе правительство руководительлĕсем мавзолей трибуни çинчен анăçĕ. Сталин юлташ аллине çӳле çĕклесе Мускава саламлать.

Сталин юлташăн доклачĕ— пирĕн ĕçпе кĕрешӳ программи

КУСЛАВККА, ноябрĕн 9-мĕш. (Телефон тăрăх). Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада тата Хĕрлĕ Çарăн параднче тухса каланă сăмаха районри ĕççыннисем радио тăрăх пысăк тимлĕхпе итлерĕç. Районри предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсенче митингсем пулса иртрĕç. Митингсенче ĕççыннисем тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкмалли çула кăтартса пачĕ. Пирĕн задача — продукцисене хăвăрт тата пысăк пахалăхлă туса кăларасси. Эпĕ пĕр браксăр ĕçлеме, пысăк пахалăхлă продукци кăларма пулатăп.

Карелов юлташ мĕнпур рабочисене çар ĕçне татах та тимлĕрех вĕренсе алла илме чĕнчĕ.

Хăма çуракан цехри рабочисен митингĕ пысăк çĕкленӳпе иртрĕ. СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Цыганова юлташ митингра çапла каларĕ:

— Сталин юлташăн доклачĕпе сăмахĕ пире вăйлăн кĕрешме чĕнет. Сталин юлташ доклачĕ ылханлă тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре татăклă программа пулса тăрать. Эпир октябрь уйăхĕшĕн плана срокчен тултартăмăр. Малашне тата та лайăхрах, тухăçлăрах ĕçлеме пулатпăр. Пирĕн коллектив нихăçанха пек мар çирĕп.

Цыганова юлташ цехри рабочисене Сталин юлташăн докладне тĕплĕн вĕренме тата унăн кăтартăвĕсене çирĕплĕн пурнăçа кĕртсе пыма чĕнчĕ.

ВКП(б) райкомĕ Сталин юлташăн доклачĕпе сăмахне ăнлантарса пама колхозсене, предприятисене 28 çын яма палăртнă.

П. РУСИН.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ШАХАСАН. Октябрь уявне чыслама пуçтарăннă район центрĕнчи ĕççыннисен чаплă ларăвĕ çулпуç Сталин юлташăн докладне итленине уçăлчĕ. Ун хыççăн лару тăшмана хирĕç паттăрăн çапăçакан Мускав хулинчи ĕççыннисем патне çыру ячĕ.

Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче Сталин юлташ тунă доклада районри нумай колхозсенче ушкăнпа пухăнса итленĕ. Доклада итлеме Анаткас Кибечĕн вулав çуртне 28 çын, Ямашри клуба 32 çын пухăннă. Ухманри колхозниксем пурте хăйсен киленчĕх итленĕ.

С. СОКОЛОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

КУКЕÇ. Районри учрежденисемпе колхозсенче пуринче те Сталин юлташăн докладне тимлĕн итленĕ.

Сарабакассинчи промартельре Сталин юлташăн докладне 20 çын итленĕ. Артельре ĕçлекенсем доклад хыççăн социализмлă ăмăртăва тухса, IV-мĕш квартал планне 200 процент тултарма йышăннă.

Лапсарти промартельре доклада 62 çын пĕрле пухăнса итленĕ. Доклад пĕтнĕ хыççăн колхозник Роман Егоров, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли нумай пулмасть çур килограмм çăм, пĕр тир, алшăлли, пĕр мăшăр алшăш панăскер, татах 2 тир, çур килограмм çăм пама пулчĕ. Ытти колхозниксем те Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтир хушса пама йышăнчĕç.

В. КАРАУШЕВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ

Совет халăхне саламлани

ССР Союзĕн Лондонри посолĕ Майский Юлташ ячĕпе Самба Лотурири (Индия) «Орион» хут фабрикисенчи рабочисем йышăннă çакăн пек резолюци илнĕ:

«Орион» хут фабрикисенчи рабочисен союзăн исполнительнăй комитечĕ, — тенĕ çав резолюцире,—Совет Союзне хирĕçле тунă нацистла агрессине татăклăн питлет тата çак хаяр кунсенче Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă пулнине шантарса пĕлтерет».

Çав союзăн председателĕ çапла çырать:

«Германия Советлă Россия çине улăтавăн тапăнни пире паллă пулнăранпа, эпир Российăна кăшт та пулсан пулăшасси çинчен ĕмĕтленнĕ. Пирĕн шухăш-кăмăл сирĕппе пĕр шухăшлă пулнине палăртас шутпа эпир пĕр саслă пулса йышăннă çак резолюцине ярса паратпăр тата Сирĕн çĕршыв хальхи йывăр испытанирен ăнăçлăн тухасса шанса тăратпăр. Мĕншĕн тесен вăл нацистсен вăйĕсене хирĕç çапăçма тата вĕсене çĕнтерме çителĕклĕ таранах вăйлă».

Гавас—ОФИ агентствин черетлĕ фальшивки

Стамбулран Гавас—ОФИ агентстви советăн подводнăй лодки Турцин Стамбулран Варнăна груз тиесе каякан сухи-илӳ суднине путарнă, тесе пĕлтерет. Кунпа пĕрлех агентство Турци суднине путарни çинчен агентствăн уполномоченнăйĕсем судно çинче хăйсем пулнă пекех тата мĕн пулса иртнине курнă пекех çавтери тĕплĕн, анчах та хăйĕнчен хăй шикленсе çырса кăтартать.

Гавас—ОФИ агентстви советăн подводнăй лодки Турци суднине путарнă тесе пĕлтерни чи ирсĕр провокаци пулса тăни тата ăна пĕтĕмпех немĕçсен фашистла агентурин заданийĕ тăрăх туртса кăларни ĕнентерсе каламасăрах палла. Гавас—ОФИ агентстви пĕлтерни суя пулса тăни çакăнтан та аванах курăнса тăрать: агентство пĕлтернĕ тăрăх, Турцин путнă парохочĕн команди Стамбула тавăрăнман-ха, апла пулсан, Гавас—ОФИ агентствине ун çинчен никам та пĕлтерме пултарайман.

Юлашки вăхăтра, нимĕçсен пропаганди панкрута тухнă пирки тата пĕтĕм тĕнче умĕнче хăйсене хăйсемех намăса кĕртсе ӳкернĕ май, гитлерла шайккă Германи пропагандин нушисем валли нимĕç маркиллĕ мар, анчах та пĕтĕмпех нимĕçсене пăхăнса тăракан ютçĕршывсенчи агентствăсемпе тата ытти организацисемпе усă курассине вăйлатрĕ. Гавас—ОФИ агентствине гитлеровецсем çав ĕçре пĕрремĕш вырăна хураççĕ.

Германи пичечĕ ирĕксĕр йышăнни

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Нумаях та пулмасть Германи пичечĕ вулакансене: хĕл пулаччен Хĕвелтухăçĕнче вăрçă ĕçĕсем çĕнтернипе вĕçленеççĕ, тесе пĕлтернĕччĕ.

Юлашки вăхăтра Германи пичечĕн шухăш-кăмăлĕсем чылаях улшăнчĕç. Хаçатсем вăрçă йывăрлăхĕсем, Хĕвелтухăçĕнче Германи салтакне тӳссе иртерме тивекен йывăрлăхсем, противник тимлĕн хирĕç тăни тата, юлашкинчен, вăрçă вăрăма чăсăлни çинчен çырма тытăнаççĕ.

Германи пичечĕн, Геббельсăн шарлатанла сводкинче вăрçăн малтанхи эрнинчех советăн хĕçпăаллă вăйĕсене пĕтерсе тăкнă, тесе пĕлтернĕ хыççăн, халĕ совет çарĕн боевой пахалăхĕ чаплă пулнине ирĕксĕрех йышăнмалла пулать. «Нихăçан та пытарса тăман, — тесе çырать «Берлинер берзенцейтунг» хаçат та çавăн пекех «совет салтакĕ хăюллă тата чеелĕхпе усă курать, вĕсене малтанах курса пĕлме те май килмест», тесе йышăнать.

Америкăн суту-илӳ парохочĕсене хĕçпăаллантарас тĕлĕшпе сенат йышăннă решени

ЛОНДОН, ноябрĕн 8-мĕш. (ТАСС).—Рейтер агентстви Вашингтонран çапла пĕлтерет: сенат законопроект йышăннă, çав законопроект тăрăх Америкăн суту-илӳ парохочĕсене хĕçпăаллантарма, çавнашкалах вĕсене вăрçăн вăрçакан çĕршывсен порчĕсене тата вăрçă зонисене кĕме ирĕк параççĕ.

Представительсен палати суту-илӳ парохочĕсене хĕçпăаллантарасси çинчен хатĕрленĕ законопроекта йышăннă. Хальхи вăхăтра сенат çирĕплетнĕ законопроекта пăхса тухма представительсен палатине параççĕ. Правительство çыннисем хушшинче çав законопроекта представительсен палати ырлать, тесе шутлаççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Выръянти промышленноçа фронт интересĕсене пăхăнтарар

Выръянти промышленность — пирĕн оборонăн çавтери пысăк резерв пулса тăрать. Геройла çапăçакан фронта союзлă тата республика промышленноçĕ пулăшса тăнисĕр пуçне, выръянти промышленность та продукци ытларах парса тăма тивĕçлĕ. Пирĕн выръянти промышленность Хĕрлĕ Çар валли хăшпĕр çар снаряженийĕсем панипе пĕрлех, боецсене куллен кирлĕ пулакан таварсене—ăшă тумтирсем, çĕлĕксем, çăматăсем тата продовольстви çителĕклĕ парса тăма пултарать. Кашни районра, кашни хулара выръянти промышленноçа анлăрах вăйлатса пыма пур майсемпе те усă курасси — партипе совет организацисен ответлă задачи. Çав задачăна ăнăçлăн пурнăçласа пыни фронта кирлĕ таварсемпе продуктсене ытларах парса тăрас ĕçе татса парать.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1941 çулти январĕн 9-мĕшĕнче «Выръянти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен» йышăннă постановленипе выръянти промышленноçа промкооперацин отраслисене ӳстерсе тата малалла аталантарса пырас ĕçре пысăк выръян йышăнса тăчĕ. Çав постановленипе выръянти советсен пуçарулăхне ӳстерчĕ, районсемпе хуласенче выръянти чĕртаварпа ĕçлекен çĕнĕ производствăсем уçас интереса вăйлатрĕ. Çакна пула Чăваш республикинче çĕнĕ предприятисемпе цехсене 30 яхăн уçнă, артельсем 10 ытла организацилене, ремонт тăвакан 27 предприяти туса йĕркеленĕ, юлашкинчен тата выръянти промышленноçăн предприятийĕсемпе промкооперацисем тĕрлĕ çĕнĕ сортсем 50 ытла кăларма тытăннă.

Чăваш республикинче лайăх ĕçлесе пыракан выръянти промышленность предприятийĕсем сахал мар. Вĕсем кашни уйăхри производствăлла плана ытлашшипех тултарса пыраççĕ, ĕç тухăçлăхне ӳстереççĕ. Çĕмĕрлери индпошив мастерскойĕ октябрь уйăхĕн планне 219,5 процент тултарнă, Шупашкартри Ленин ячĕпе тăракан фабрика 273,9 процент, Октябрьски райпромкомбинат — 126,4 процент, Шăмăршăри райпромкомбинат — 106,8 процент, Шупашкартри индпошив мастерскойĕ—110,1 процент тултарнă.

Выръянти промышленность предприятисенче ĕçлекен рабочисемпе работницăсем хăйсен ĕçĕнче нумай пуçарулăх кăтартса, пĕтĕм вăйпа ĕçлеççĕ. Ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли параккан кашни алшăше, ăшă кĕпене тата ытти тумтирсене вĕсем тăрăшса çĕлеççĕ, сыхаççĕ. Вĕсен хушшинче совет патриотисемĕн туйăмĕ пысăк. Çакна пула вĕсем цехсенчен тухмасăр кунĕ-кунĕпе ĕçлесе 2—3 норма тултараççĕ. Сăмахран, Çĕмĕрлери индпошив мастерскойĕнче ĕçлекен Вяхирева, Антипов юлташсем нормăсене 130—150 процент тултараççĕ. Çав районрах Ширшов ячĕпе тăракан çĕвĕ çĕлекен мастерскойри Курасова, Пичугина тата Соловьева юлташсем плана 200—230 процент тултарса пыраççĕ.

Канашри промкомбинатра 57 çын хăйсен нормисене ытлашшипех тултараççĕ, нумайĕшĕ 150—200 процент таран тултараççĕ.

Канашри индпошив мастерскойĕнчи работницăсем хушшинче Ярова, Бахова, Лялина, Кричевская тата ытти стахановкăсем те производствăра паха тĕслĕхсем кăтартса пыраççĕ.

Ивановăри кирпĕч тăвакан заводри работница Глухаркина юлташ сменăри нормăна ытлашшипех тултарать. Первомайски районри Чеменеевскри мастерскойра урапа тукунĕ тăвакан Шапочкинпа Матросов юлташсем сменăри нормăна 200 процент тултараççĕ. Çакăн пек тĕслĕхсем татах та нумай.

Анчах пур предприятисем те мар хăйсен ĕçне вăрçă чухнехи пек çĕнетсе пыраççĕ. Хăшпĕр предприятисем плана тултараймасăр, кая юлса пыраççĕ. Ишлейри райпромкомбинат квартал планне мĕнпурĕ те 39,4 процент çеç тултарнă. Çĕрпӳри примус горелкисем тăвакан завод хăйĕн планне уйăхран уйăхах тултарса пыраймасть. Райсовет исполкомĕ завода директорсăр тăратса хăварнă. Кунта паянхи куна çитсе те руководитель тупса лартман. Пăрачкаври промкомбинат та производство планне тултарас ĕçре кая юлса пырать. Выръянти промышленность предприятисем çавнашкал кая юлса пыни вĕсем çине ĕççынни депутачĕсен выръянти Совечĕсемпе исполкомĕсем çителĕклĕ çавăрăнса пăхманнинчен килет. Вăрçă вăхăтĕнче çакнашкал япăх ĕçлекен предприятисем пулмалла мар. Хăшпĕр райсовет исполкомĕсем кайра пыракан предприятисенчи çитменлĕхсене пĕтерме пулăшас выръянне, тĕрлĕ решенисем йышăннипех лăпланаççĕ. Тепĕр чухне çав решенисем çитменлĕхсене пĕтерме мар, вĕсене хӳтлеме пулăшаççĕ. Сăмахран, Çĕмĕрле райисполкомĕ квас тата ĕçмелли путлă шывсем туса кăларакан заводри работниксене лайăх ĕçленĕшĕн премби панă, çав решенирех топливăна ытлашши çунтарса пĕтернĕ тесе палăртнă.

Шупашкар хула Совечĕн те çаплах çитменлĕхсем пулса пыраççĕ. Горпромкомбинат квартал планне тултарайман. Анчах та хула Совечĕпе унăн выръянти промышленность енĕпе ĕçлекен яланлăх комиссийĕ (председателĕ Шипов юлташ) комбинатăкая юлса пынишĕн пăшăрханмаççĕ. Промкомбинат предприятийĕсенчи ĕçсем çинчен хула Совечĕ пĕрре те ыйту лартса сӳтсе-явман, яланлăх комиссийĕ те ĕçе юсама пулăшу парас ыйту çинчен шухăшламан.

Ĕççыннин депутачĕсен районсенчи, хуласенчи, поселоксенчи тата ялсенчи совечĕсем выръянти промышленность предприятисене кулленех пулăшса пымалла. Хуласенчи выръянти промышленноçăн тата райпромкомбинатсен пурин те хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнтемелле. Промышленность предприятисемпе райпромкомбинатсенче халĕ кăларса тăракан продукцисĕр пуçне фронта кирлĕ çĕнĕ продукцисем туса кăларма май пурри-çуккине тĕрĕслесе тухмалла.

Октябрь уявĕ умĕн сарăлса кайнă производствăлла çĕкленĕве малалла татах та ытларах çирĕплетсе пымалла. Кашни уйăхри производствăлла плана тултарса ĕçлемелле. Вара пирĕн выръянти промышленность çĕршыв оборонине вăйлатма татах та ытларах пулăшса пырĕ.

И. АНАНОВ,
М. ПРОХОРОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 6820. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 557. Ф. б. 58 ▲ 84 п. л.